**Н.В. Никольский 130 çул тултарнине халалласа ирттернĕ уявран**

# Ентешĕмĕр ĕçне малалла тăсар

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Николай Васильевич нумай тĕпчев ĕçĕсем çырнă, чăвашсен тата Атăл çи халăхĕсен историпе культурине тĕпченĕ. Унăн ĕçне малалла тăсса, вăл 125 çул тултарнă çĕре «Муркаш районĕн кĕске энциклопедине» кăлартăмăр. Хамăр районти йăла-йĕркесем çинчен çитĕнекен ăрăва каласа парас тесе «Муркаш районĕ: уявсем, йăла-йĕркесем» кĕнеке пичетлерĕмĕр. Хамăр халăх историне, культурине, йăли-йĕркине, тавралăха тĕпчес тесе, Никольский пуçарнă ĕçе районта пурăнакансем те хастар хутшăнаççĕ. Чăваш халăх ăсчахĕ И.Д. Вязов хăйсен тăрăхĕнчи топонимика пирки «Апаш» кĕнеке кăларчĕ. Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н.Л. Яковлев Йӳçкасси тăрăхĕнчи çынсем çинчен «Сурăм çăлтăрĕсем» кĕнекере каласа кăтартрĕ. Хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пирки эпир пурте унăн «Тернистый путь художника» кĕнекинче тĕплĕн вуласа пĕлме пултаратпăр. Калайкасси шкулĕнче вĕрентекен Е.Е. Ерагин вара чăвашсен историпе культурине тĕпчесе 9 ытла кĕнеке кăларчĕ. Кунта çавăн пекех Л.П. Сергеев профессор редакциленĕ «Муркаш районĕнче çуралнă паллă ученăйсем», Социализмла Ĕç Геройне Е.А. Андреева халалланă «Обгоняя время», Петр Мазуркинăн «Чăвашсен йывăç эрешĕ» тата ытти кĕнекесене палăртса хăвармалла.

Н.В. Никольский аслă тата вăтам шкулсене йĕркелес ĕçре пысăк тӳпе хывнă. Паян районти шкулсем инноваци меслечĕсемпе ĕçлекен шкулсене суйласа илмелли конкурссенче çĕнтерни эпир хамăр ентеш ĕçне малалла тăсни пулать. РФ Президенчĕн Грантне – 1 млн. тенке Муркаш лицейĕ (2006 çулта), Москакассипе Нискасси шкулĕсем (2007 çулта), Чăваш Республикин Президенчĕн Грантне – 200 пин тенке Калайкасси (2006 çулта), Муркаш (2007 çулта) шкулĕсем илме тивĕç пулчĕç. Çавăн пекех уйрăм вĕрентекенсемпе воспитательсем те икĕ çул хушшинче РФ Президенчĕн Грантне 4-ăн, Чăваш Республикин Грантне 2-ĕн çĕнсе илме пултарчĕç.

Çакна палăртсах каламалла. Никольский вĕрентӳ ĕçĕн тĕп шăнăрне тăван чĕлхене вĕреннинче курать. Паян вара тăван чăваш чĕлхи вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулса тăчĕ. Районти шкулсенче чăваш чĕлхине, тăван ен историпе культурине вĕрентесси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

Тăван халăх культурине аталантарассипе нумай тимленĕ ентешĕмĕр. Паян районта 30 тĕслĕхлĕ библиотека. Çĕнетӳ ĕçне районти Культура çурчĕсенче те пуçларăмăр. Пĕрремĕш тĕслĕхлĕ Культура çурчĕ Республика кунĕнче Кашмашра уçălмалла. Районта «халăх коллективĕ» ята çĕнсе илнисем 11 коллектив. Районта художествăпа пултарулăх коллективĕсен смотрне ирттересси те ырă йăлана кĕнĕ. Вĕсенче çулсерен 50 яхăн коллектив хутшăнать. Районта йĕркелекен уявсенче те халăх йăли-йĕркине тĕпе хуратпăр.

Николай Васильевич хамăр халăхăн этнографипе культурине чылай тĕпченĕ. Паян ку ĕçе районти историпе краеведени музейĕ малалла тăсать. 2006 çулта тури чăвашсен сурпанĕсемпе кусса çӳрекен курав йĕркелесе Чăваш Республикин Грантне тивĕçрĕ. Паян ку ĕçе тарăнлатаса пыраççĕ. Халĕ музейра тури чăвашсен çи-пуçĕн залне хатĕрлеççĕ. Вăл Республика кунĕнче уçăлать.

Никольский халăх сывлăхĕшĕн те нумай тимленĕ. Районти медицина ĕçченĕсен кăтартăвĕпе паллашнă пулсан, паян ентешĕмĕр савăннă пулĕччĕ. Районти шур халатлă медицина ĕçченĕсем пилотлă проекта хутшăнаççĕ, «Сывлăх» наци проектне пурнăçласа, халăх сывлăхне сыхлассин шайне палăрмаллах хăпартрĕç.

Спорт сывлăх никĕсĕ пулнине те пирĕнтен кашниех лайăх пĕлет. Çавăнпа та районта халăх спортпа туслă пултăр тесе те нумай ĕçсем туса иртеретпĕр. Республика кунĕнче Муркашра Спортпа сывлăха çирĕплетмелли комплекс уçăлать. Пирĕн районти спортсменсене Раççейре çеç мар, тĕнчипех пĕлеççĕ: Валентина Егорова, Татьяна Моисеева, Вера Соколова, Петр Трофимов... Çак списока малалла татах та татах тăсма пулать. Никольский çак ачасен пултарулăхĕпе те мăнаçланнă пулĕччĕ.

Н.В. Никольский чăвашсен пĕрремĕш хаçатне йĕркелесе ячĕ. Паян республикăра чăвашла тухса тăракан хаçатсем нумай пулнине пĕлсен, ентешĕмĕр хĕпĕртенĕ пулĕччĕ. Вăл йĕркеленĕ «Хыпарăн» «ачи-пăчисем» тата мĕн чухлĕн. Ку çеç-и? Кашни районăн хăйĕн хаçачĕ тăван чĕлхепе тухса тăрать. Пирĕн районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат кăçал 62 регионти 510 хаçатпа пĕрле Раççейри «Пресса» конкурса хутшăнчĕ. «Прессăн ылтăн фончĕ» паллăна çĕнсе илме пултарчĕ.

Пирĕн ентешĕмĕр истори прогресĕ экономикăран, халăх пурнăç шайĕнчен, вĕрентӳ ĕçĕнчен тата ытти енсенчен пуçланнине палăртать. Çавăнпа та район аталану çулĕпе пытăр тесе хамăртан килнине йăлт тума тăрăшатпăр. Район иртнĕ çул республикăри районсем хушшинчи социаллă-экономика аталанăвĕнче виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Кăçалхи 4 уйăхри кăтартусем те иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен пысăк. Никольскин тăван хуçалăхĕ – Ильич яч. хис. хуçалăх – районти ура çинче çирĕп тăракан хуçалăхсенчен пĕри. Промышленность предприятийĕсенчен уйрăмах Муркашри кирпĕч завочĕ, сĕт-çу завочĕ, «Çеçпĕл» акционерсен хупă обществи кăтартăва 2 хут ытла ӳстерчĕç. Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем республикăра кăна мар, Раççейри потребкоопераци ĕçченĕсемшĕн те ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Кăçал Республика кунĕнче чăваш халăхĕн ятне-сумне Раççей тата ют çĕршыв хănисен умĕнче Муркашсен кăтартмалла. Çакă пирĕншĕн – пысăк чыс. Çавăнпа пĕрлех каламалла çук пысăк яваплăх та. Чăвашсен пысăк уявĕ çӳллĕ шайра иртĕр тесе хамăртан килнине йăлт тăвăпăр. Никольскин юбилейĕ Республика кунĕ умĕн иртни те хăйне евĕрлĕ палăрăм. Николай Васильевич пире умри тĕллевсене пурнăçлама вăй парса тăнăн, пире шаннăн туйăнать. Таврара тирпей-илем тытса пыни, ырă ĕçсем туни, хамăр ĕçе юратса, тимлесе ĕçлени те Никольский пуçарнă ĕçе тăсса пыни пултăр пирĕншĕн пуриншĕн те.

– Никольский пулăшнă чух тăрăшăр, – терĕ Юрий Александрович. Вырăнти хуçалăх ертӳçи И.В. Николаевăн «Намăс курмалли çук паллă ентешĕмĕр умĕнче» текен сăмахсене пуçтарăннисем пурте Ильичсем малалла та ӳсĕм çулĕпех каяссине ăнланчĕç. Хуçалăхри 150 çын хăйĕнчен мĕн килнине йăлтах тăвать хуçалăх аталантăр тесе.

### «ПАРКА ÇИТĔНЕТ ВĂЛ АКНĂ ВĂРЛĂХ»

Н.В. Никольскин çуралнă кунĕ Муркашсемшĕн кăна мар, пĕтĕм чăвашсемшĕн уяв. Çакна хăйĕн сăмахĕнче Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, архив ĕçĕсен тата информаци политикин министерствин пай пуçлăхĕ Н.М. Краснов та палăртрĕ:

– Çак унăн тымарĕ вара шăпах çакăнта, – терĕ вăл. –Çĕр çинче 160 тĕрлĕ халăх пурăнать. Чăвашсем хăйсен йышĕпе 4-мĕш вырăнта. Çак йышлă халăха пĕрлештерекенĕ пулнă Никольский.

Николай Васильевич акнă пичет вăрлăхĕ те паян йышлăн шăтса тухса парка çитĕнет. «Хыпарăн» хăйĕн кăна миçе «ача» çитĕнсе саланчĕ халăх хушшине. Ку çеç-и? Никольскин ятне çĕнĕрен чĕртес ĕçре вăл йĕркеленĕ «Хыпар» хаçат коллективĕ нумай тимлерĕ. Акă мĕнле хаклать ăна «Хыпар» издательство çурчĕн генеральнăй директорĕ – тĕп редакторĕ А.П. Леонтьев:

– Малтан Николай Васильевичăн ятне асăнмасăр унăн ĕçĕпе усă куракансем сахал мар пулнă. Эпир çакна чарса лартрăмăр. Наука çыннисене вăратрăмăр, вĕсем халĕ Никольскин ĕçĕсене малалла тăсассипе нумай ĕçлеççĕ.

Алексей Петрович хăйĕн сăмахĕнче Н.В. Никольскин ятне Раççей энциклопедине кĕртмеллине, Шупашкарта унăн палăкне лартмаллине палăртрĕ. Тата – Никольский пухнă чăваш юмахĕсене шкулсем валли хатĕрлесе кăлармаллине.

Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн пай пуçлăхĕ Г.Б. Матвеев митингра каланă тăрăх, хальлĕхе Никольскин ĕçĕсене пухса 2 том кăларнă. 3-мĕш томне хатĕрлесе çитернĕ. Пĕтĕмпе вара 4 том кăларма палăртнă.

Хаваслă пухура та, митингра та çак кун Никольские пурте ырăпа аса илчĕç. Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн директорĕ В.С. Григорьев ентешĕмĕр пурнăçне тĕплĕн тишкерчĕ. Çавăн пекех Никольский ячĕпе хисепленекен Шупашкарти педагогика колледжĕн директорĕ В.В. Сапожников, районти таврапĕлӳçĕсен Канашĕн ертӳçи Е.Е. Ерагин, писатель, художник, таврапĕлӳçĕ Н.Л.Яковлев, ял çыннисем, тăванĕсем тухса калаçрĕç. Пурин сăмахĕсенчен те çакă курăнчĕ: ентешĕмĕр çав тери ырă кăмăллă çын пулнă.

Хăйсене пĕчĕк чухне Никольский : «Ачасем, çийĕр, чĕрĕ çимĕç çисен çирĕп пулатăр», – тесе пан улмипе хăналанине кăмăллăн аса илеççĕ. Е тата аслашшĕ-асламăшĕсем Никольски пичи яла килсен эмелсем илсе юлатпăр таха, тенисем те паян та асрах тухса калаçакансенче.

### УЯВ КĂНА ВĔÇЛЕНЧĔ

Астăваççĕ çеç мар, сума сăваççĕ, юратаççĕ кунта пурăнакансем Купăрля ятне çӳле çĕкленĕ ентешне. Çак кун ăна халалласа ирттернĕ тĕрлĕ конкурс çĕнтерӳçисене чысларĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.И. Егоров. Тĕрлĕрен пултарулăх конкурсĕсене ачасемпе пĕрле çитĕннисем те кăмăлтан хутшăнни çак юрату чăннипех çирĕппине кăтарса пачĕ. Çак кун йĕркеленĕ ял уявĕнче ялти пултаруллă та ĕçчен çемьесене чысларĕç. Тĕрлĕ номинаципе: «Чи типтерлĕ хуçалăх», «Чи тирпейлĕ пӳрт умĕнчи пахча» тата ытти те. Уявăн малтанхи пайĕсенче Москакасси шкулĕнчи, Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче, педколледжра вĕренекенсем савăнтарчĕç пулсан хăйсен пултарулăхĕпе, ял уявĕнче вара Муркашри «Расна», Йӳçкассинчи «Туслăх», Мăн Токшикри «Тăванлăх», Ваçкассинчи «Талан» ушкăнсем юрă-ташă парнелерĕç.

Муркаш районĕнче пуçланнă уяв тепĕр кун Шупашкарта тăсăлчĕ. Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институтĕнче Н.В. Никольские халалласа наукăпа практика конференцийĕ иртрĕ. Нумай наука çыннипе пĕрле унта пирĕн район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та хутшăнчĕ. Юрий Александрович Никольский ĕçне районта унăн ентешĕсем мĕнле тăсни çинчен доклад туса пачĕ.

Н.В. Никольские халалланă уяв историе кĕрсе юлчĕ. Унăн ячĕпе çыхăннă ĕçсем вара вĕçленме мар, пуçланаççĕ кăна-ха. Тĕрĕсрех каласан, малалла ку енĕпе татах та хытăрах тăрăшмалла. Апла пулсан, район пуçлăхĕ калашле, Никольскипе мухтанни кăна çителĕксĕр, унăн ĕçне малалла та пĕрле тăсмалла пирĕн.

**Л. ТУКТИНА.**



**Купăрля пурнăçĕпе паллашатпăр.**


**Ялти кӳлĕре.**

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

# Тирпейлĕх хамăрах кирлĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Хăвăрах шухăшласа пăхăр: паян туса ирттерекен тирпей-илем ĕçĕсене Республика кунĕшĕн ирттерместпĕр-çке. Çак тирпейлĕх хамăршăнах. Район пуçлăхĕ калашле, хăнасем хăйсемпе пĕрле илсе каймаççĕ пирĕн тирпейлĕхе, хамăр илемлетнĕ тăван вырăнта хамăрах кăмăллă пулать пурăнма. Куç умне кăларăр-ха малтанхи Шупашкара, хальхипе танлаштарăр. Чечек ăшне путнă тирпейлĕ урамсемпе скверсенче чун уçăлать. Ĕçлесен, хамăр пурăнакан вырăна тирпейлĕ тытсан, хамăрах лайăх иккен. Çавăнпа та мĕн çунтарма пулать – кивĕ хута, турпассене – çунтармалла. Кĕленче савăтсене вара райпона памалла. Юрий Александрович Мăн Сĕнтĕр райповĕ ку енĕпе ĕçленине, Муркаш райповĕ те çак ĕçе йĕркелесе ярассине палăртрĕ.

Тирпей-илем кĕртессипе Чуманкассисем ĕçлеççĕ, ĕçлемеççĕ мар. Тĕслĕхрен, Чуманкасси шкулĕнче вĕренекенсем учительсемпе пĕрле чечек клумбисем тăваççĕ, шкул сăн-сăпачĕ те улшăнсах пырать. Çапах та пурте ăнлансах çитеймен иккен-ха тирпейлĕх хамăртан килнине. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева каланă тăрăх, Отарккăра çул хĕррине пуш кĕленчесем купаласа хăвараççĕ иккен-ха. Ял хушшипе çул тума шутлатпăр пулсан, малтан тирпейлĕх тумалли çинчен манас марччĕ. Ку пурне те пырса тивет. Кăçал ялсем патне асфальт çул туса пĕтерсен, çак ĕçе ялсем хушшинче тума пуçласшăн. Апла пулсан хамăртан килнине йăлтах тăвасчĕ ĕмĕт пурнăçлантăр тесен. Хамăр юлхавпа хамăра хамăр ура хурар мар.

Хăнасене пӳрт-çурта тирпейлесе кĕтсе илесси вара вăл чăвашра ĕмĕртенпех. Республика кунĕ иртни хăй кăна районшăн та пысăк пулăшу. Вăл е ку проблемăна татса пама çăмăлтарах. Илер-ха çĕнĕ урамсене электричество кĕртессине. Юрий Александрович çакна палăртрĕ, Республика кунне ирттерекен Муркашпа Йĕпреç районĕсене ку енĕпе çăмăллăх пама шантараççĕ. Ав тин кăна Шупашкарта Тĕнче кубокĕ иртрĕ. Çакнашкал пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприяти иртни укçатенкĕ тĕлĕшĕнчен те пулăшу пулчĕ тĕп хуламăршăн.

Е тата усă курман çĕрсене хута ярассине илер. Кăçал кĕр тыррисене те районта тата ытларах акса хăварма палăртаççĕ. Çĕр пайĕсене хăрпăрлăха куçарассипе те хăвăртлатмалла ĕçсене. Çитес çулхи январĕн 27-мĕшĕччен ĕлкĕрмелле. Çĕрĕ пулсан, унпа кайран хăть мĕн ту: хăть арендăна пар, хăть сут, хăть хăв усă кур. Н.В. Прокопьева çак ыйтусем çинче чарăнчĕ.

Тĕл пулура тĕрлĕ ыйтусем пачĕç пуçтарăннисем. Вĕсем çине тулли хуравсем илчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Редакци почтинчен**

# Кăçал 400 йывăç лартрĕ

Николай Семенов мĕн ачаранпах ĕçлесе ӳснĕ. Шкул вĕренсе пĕтерсен совет çарне каять. Унта вăл чикĕ хуралĕнче службăра тăрать. Унтан таврăнсан ăна колхозра водитель пулса ĕçлеме илеççĕ. Тăван колхозра Николай шофер пулса нумай çулсем тăрăшать. Прицеплă машинăпа йывăç, хăма тата ытти строительство материалĕсем турттарать. Унтан вăл колхозри строительсен бригадинче ĕçлет. Хастар çамрăка правлени строительсен бригадине ертсе пыма шанать. Николай Семенов строительсен бригадине 20 çул ытла ертсе пырать. Колхозра витнĕ йĕтемсем, тырăпулă валли складсем, фермăсем тунă çĕрте тăрăшса ĕçлесе пынă. Нумай строительство ĕçĕсене пурнăçланипе пĕрлех хĕллехи вăхăтра вăрман касса хатĕрленĕ. Çуллахи вăхăтра материал çителĕклĕ пултăр тенĕ. Николай Семенов, паянхи куна тивĕçлĕ канура пулин те, ахаль лармасть: çырмасенче йывăçсем лартассипе ĕçлет. Эпĕ ăна ял çумĕнчи çырмара тĕл пултăм. «Ку йывăç кăçал лартнисен шутĕнче 400-мĕш», – терĕ вăл хăй лартнă йывăç çине кăмăллăн пăхса.

Николай Семенов, çамрăк çын мар пулин те, ĕçсĕр ларма юратмасть. Унăн ĕмĕчĕ – йывăçсем ытларах лартса хăварасси. Ăнăçу сунар Николай Семенова çак пархатарлă ĕçе те малалла та пурнăçлама.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**

Ваçкасси ялĕ.